**П. Хусанкай**

**Пейо (Крачолов) Яворов**

Пейо (Крачолов) Яворов çурални 90 çул тултарчĕ. Ун çинчен пăлхар литературинче питĕ нумай çырнă. Вăтăр çиччĕ те тултараймасăр пÿкле вилĕмпе вилнĕ чаплă поэт темĕн чухлĕ сăмах-юмах хускатнă, темĕн чухлĕ легенда шухăшласа кăларттарнă.

Хăй вăл 1878 çулхи кăрлачăн пĕрремĕш кунне Чирпан хулинче çуралнă. Вăл çуралсан виçĕ кунтан çав хулана пăлхарсене 500 çулхи тĕрĕк пусмăрĕнчен хăтаракан Раççей çарĕ пырса çитнĕ.

Поэт ашшĕ Тотьо Крачолов ун чухне ата-пушмак çĕлесе пурăннă, вак-тĕвек суту-илÿ туса йÿнеçтернĕ. Унăн йăхĕ-тĕпĕ çинчен хурăнташĕсем тĕрлĕрен сăмахланă. Аслашшĕ, пулас поэтăн мăн аслашшĕ, Кĕçĕн Азирен килсе кĕнĕ араб пулнă, имĕш. Пăлхар хушшинче ăна Стоян Крачола тенĕ. Хăшĕ-пĕри вăл тĕрĕксене хирĕç вăрттăн кĕрешнĕ пăлхар хайдукĕсен пуçлăхĕ пулнă, теççĕ. Балкан кукăр-макăр çулĕ-йĕрĕпе çÿресе укçа пухнă та, хăйне никам палламан Чирпан хулине вырнаçса чорбаджия (пуян хуçа) пулса пурăна пуçланă имĕш вара...

Поэт амăшĕ сарă çÿçлĕ хитре хĕрарăм пулнă, теççĕ. Вăл ачи-пăчине илемлĕ юрăсем питĕ ăста юрласа панă.

Пейо питĕ имшер те нишлĕ çуралнă. Асламăшĕ пырса пăхнă та: «Ха! Аттем чĕрĕлсе килнĕ мар-и?»—тенĕ.— Леш хайхи «араб» тĕслех ку,— тесе каласшăн пулнă ĕнтĕ вăл.

Ачи час-часах чирленĕ. Виççе çитсен, тин калаçкала пуçланă. Усерехпе те питĕ чĕмсĕрскер пулнă. Ашшĕ ăна «питĕрнĕ арча» тенĕ. Урамри ача-пăча вăйине те хутшăнман вăл. Вĕсем тĕрмешнине-кĕрешнине йăвашшăн пăхса тăнă.

Вĕренессе вăл лайăх вĕреннĕ. Пăлхар чĕлхи урокне питĕ ăста каласа панăшăн вĕрентекенĕ ăна пĕрре ытараймасăр пилĕк пус панă. Ку — пулас сăвăçăн чи малтанхи гонорарĕ пулнă,— тет Георги Константинов — Яворовăн «Копнения» («Ĕмĕтсем») ятлă кĕнекин редакторĕ. Кĕнекене çамрăк-кĕрĕм валли ятарласа пухнă сăвви-калавĕсене суйласа кĕртнĕ (София, 1949, «Народна младеж» издательстви). Поэтăн пурнăç деталĕсене эпир çав кĕнекери Г. Константинов статйинчен илтĕмĕр.

Пловдов гимназийĕнче Яворов вырăс поэзийĕпе паллашать: Пушкин, Лермонтов, Некрасов — унăн юратнă поэчĕсем. Гимнази пĕтерсе таврăнсан, вăл Чирпанра телеграфист пулма вĕренет. Çав вăхăтрах социализм çинчен вĕрентекен кĕнекесем вулама тытăнать. Хăй тавра пĕр 30—40 йĕкĕте пĕрлештерет.

Поэтăн пуçласа пичетленнĕ сăвви «Малалла!» ятлă. Вăл 1895 çулта «Глас македонски» хаçатра тухнă. Вунçичĕ çулхи арача Македонири пăлхав çĕкленĕ

тăванĕсене пулăшма чĕнет. Каярах вăл «Мисъл» журналта тăтăшах пичетленсе тарать. Анчах поэт ĕçĕпе çеç пурăнасси инçе-ха. Вăл — телеграфист: малтан пĕчĕкрех вырăнта, кайран пысăкраххинче, пуçлăх та пулса пăхать... Сливен, Стралджа, Анхиало — тĕрлĕ жуласене çитет. Унтан Софире те çулталăк хушши пуштă-телеграф чиновникĕнче ларать. Анчах Македонири революци юхăмĕ ăна туртнăçем туртать. Хăйĕн чылаях тухăçлă вырăнне пăрахса вăл Македоние каять: кĕрешет, ўкĕтлет, унти пăлхарсем валли революцилле хаçатсем кăларать; хăй ту хушшинчи шăтăксене пытана-пытана пурăнать... Юлташĕсене çапла калать: «Хам ăçта пуç хурсан та, куçăм Македони еннелле çаврăнтăр; мана пăлхавçăсен тумĕпе пытарăр»,— тет. Çав вăхăтрах вăл калама çук вăйлă та хăй евĕрлĕ сăвăсем çырать. Чи мухтавлă пăлхар лирикĕсен шутне кĕме тивĕçлĕ .

Болгарин ун чухнехи çутĕç министрĕ Иван Д. Шишманов профессор Яворова, пысăк хисеп туса, Халăх библиотекинче ĕçлеме чĕнсе илет. Унта ăна вăл икĕ çуллăха Парижа ярать: Францин чаплă культурипе, литературипе паллашма сĕнет. Таврăнсан – Халăх театрĕн драматургĕ туса хурат. Яворов çав театртаа икĕ çул хушшинче хăйĕн икĕ пьесине лартать: «Витоша таврвшĕнче» (1911) тата «Аçа çапсассăн – ахрăм лăпланать» (1912). Пăлхар критики çав пьесăсене халĕ те пысăк хак парать: идея тĕлĕшпе çўлте тĕракан, психологилле тарăн драмăсем, тесе йышăнать.

«1912 çулхи Балкан вăрçи вăхăтĕнче Яворов каллех çар çынни пулать. Пăлхар çарĕ çĕнтерсе пынишĕн савăннăскер, Бухарест мирĕ хыççăн вăл питĕ хурланать, ма тесен çак килĕшў тăрăх Македони те, Болгарин ытти хăшпĕр çĕрĕсем те çĕнĕ пусмăра лекеççĕ» (Г. Константинов).

1914 çулхи юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче 36 çулхи поэт, кил-йышĕнчи йывăр инкеке пула, хăй ĕмĕрне хăй татса пăрахать.

Çакăнта пичетленекен «Эрменсем» сăвă — поэтăн чи вăйлă сăввисенчен пĕри. Ăна вăл 1900 çулта, хăй çирĕм иккĕре чухне, çырнă, Тăван çĕршывĕнчен таталнă, тĕрĕк пусмăрĕнчен тарса ўкнĕ эрмен çыннисене Яворов хăй телеграфистра ĕçленĕ чухне курса сăнанă. Çавсен хутне кĕрсе, чăн-чăн ырă çынлăх кăмăлĕпе, халăхсен пулас туслăхĕн ĕмĕчĕпе çырăннă çак сăвă.

Мускаврa манăн пăлхарсен хальхи паллă критикĕпе – Эфрем Каранфиловпа курса калаçма пулчĕ. Яворовăн çак сăввине асăнсах, вăл çапла каларĕ: «Тĕнчери эрменсем пирĕн поэта пĕр çав сăвăшăн вуникĕ çĕршывра палăк лартнă!» - терĕ.

Çак хыпар мана питĕ пысăк шухăша ячĕ. Халăх чĕрине тивлеме, унăн мал ĕмĕтне çĕклемелле çырнă сăвă, кирек мĕнлечĕлхепе тухнă пулсан та, çитетех иккен çав халăх патне. Эпĕ ăна чăвашла куçартăм.

Вуникĕ çĕршывра вуникĕ палăк… Çакă тивĕçлĕ чыс мар-и, ĕмĕрлĕх хисеп мар-и поэта?!